# Хусанкайăн тăвату автографĕ

*Юлташлăхра телей*
*иккен, мĕн,*
*Илем юлташлăхра кăна!*
*МИТТА Ваçлейĕ.*

ТАВАТĂ сăвă кĕнеки. Пысăках мар, тытса вулама питĕ меллĕ, тĕрлĕ тĕслĕ, тĕрлĕ ятлă. Шупашкарпа Мускавра тĕрлĕ çулта тухнă тăватă кĕнеке. Паян вĕсем шĕкĕр хуламăрăн пĕр хăтлă хваттерĕнче çӳлĕк çинче (тата çĕр-çĕр кĕнекепе юнашар) вырнаçнă. Çыраканĕ - Петĕр Хусанкай, вĕсене хальхи вăхăтра упраканĕ, хуçи - Митта Ваçлейĕн кĕçĕн хĕрĕ - Илемпи Васильевна...

Мĭттапа Хусанкайăн тĕлĕнмелле пысăк та ăмсанмалла пĕрлĕхĕ, туслăхĕ çинчен чăваш литературине çывăх çынсем. лайăх пĕлеççĕ. "Çак туслăх пирĕншĕн пурнăç палăрăмĕ кăна мар, вăл тăван литературăпа культурăмăр историйĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ факчĕ пулса тăрать", - тесе çырать акă Атнер Хусанкай.

Тĕрлĕ шăпаллă тантăш-поэтсен туслăхĕ, пĕр шухăшлăхĕ, кăмăл-ĕмĕчĕ çинчен эпир вĕсен хайлавĕсенче, çырса хăварнисенче, аса илӳсенче, пĕр вăхăтра пурăннă, ĕçленĕ, тус пулнă çынсем каласа панисенче вуласа пĕлетпĕр. Çапах та пĕтĕмпех каламан-ха, калама хăяйман та, тен, ăна каласа пама, каласа пĕтерме май та çук пулĕ. "Ик çутă çăлтăр" пĕрне-пĕри юратни, пĕрле ĕмĕтленни, мĕнле хутшăнни çинчен вĕсене пĕлекенсем хушшинче илемлĕ халап-юмах, шӳтлĕ сăмах евĕрлĕ çӳрени сăваплăрах та, хаклăрах та пулĕ...

Илемпи Васильевна каласа парать: "Анне, Нонна Кирилловна (Митта Ваçлейĕн мăшăрĕ) час-час аса илетчĕ: Ваçлей пуç янă çĕртрен таврăннă кун манăн хулана тухса кĕмелле пулчĕ. Каялла таврăнтăм - Ваçлей çук. Татах тытса кайрĕç тесе вăй юлмарĕ... Хусанкай илсе тухса кайнă иккен. Ир пуласпа çеç таврăнчĕç. Кайран чылайччен каçару ыйта-ыйта айăпне

йы-шăнчĕç. Хусанкайпа иккĕшĕ çĕрĕпех Атăл хĕрринче çӳренĕ иккен, тăранайми калаçнă, калаçнă, калаçнă. Пурин çинчен те манса кайса, ним çинчен аса илмесĕр! Мĕн тери тунсăхланă пулнă ĕнтĕ вĕсем! Мĕн тери нумай пулнă вĕсен пĕр-пĕрне каламалли!..

Кĕнекесем патне таврăнар. Вĕсене пурне те Хусанкай Миттана халалласа çырса панă. Виçĕ кĕнекине (Мускаврa 1953 çулта тухнă "Поют дубравы", 1954 çулта Шупашкарта тухнă "Тăван сасăсем" тата 1950 çулта Шупашкарта пичетленнĕ "Дружба") 1955 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче, теприне вара - "Дом в Горках" ятлине, Мускавра 1955 çулта пичетленнĕскерне - çав çулхи юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче халал сăввисем çырса панă. Юлашкине (вăл вăхăтра аслă литература курсĕнче вĕренекенскер) Мускавран ярса панă, ун çине çапла çырнă (унта сăмах Ленин çинчен пырать):

**Пĕлетĕп: манăн вăй-хăватăм**
**Çак шухăш Улăпне çĕклеймĕ.**
**Хам унсăр çуккине ăнлантăм,**
**Çав пултăр ĕçĕмри телейĕм.**

Юпа уйăхĕнчех, 26-мĕшĕнче, Митта хăйĕн тусне тав туса çапла хурав ярать: "Кĕнекӳшĕн - тав. Ĕнер ун çинчен радиопа вырăсла пĕлтертĕмĕр. Диктор, витĕмлĕрех пулма, чăвашсене тивекен йĕркесене (Яковлев çинчен) ятарласах вуласа пачĕ".

"Дружба" кĕнекине çапла каласа парнеленĕ.

**Миттана, Васлейĕме**
**Çак Туслăх вăрçăра çуралчĕ.**
**Пур тепĕр туслăх тăнчере...**
**Çавна нихçан та манас марччĕ.**

Вăтăр çула яхăн маларах тĕвĕленнĕ вĕсен туслăхĕ. 1926 çулти çуллахи кун пĕрремĕш хут куçа-куçăн курса паллашаççĕ çамрăксем - Шупашкара ялкорсен пухăвне пынă вĕсем.

"Митта Ваçлейне эпĕ халĕ тĕрленĕ шурă кĕпепе, çĕнĕ çăпатапа, улăм шĕлепкепе куратăп. Аллинче ĕнтсе тĕрлесе тунă, лак сĕрнĕ туя пурччĕ пек астăватăп... Хаваслă, йалт-ялт куçлă, хастарлă йĕкĕтчĕ вăл. Çĕнеле пуçланă чăваш ялĕн каччи», - аса илет "Пуç кăшăлĕ вырăнне" тĕрленчĕкĕнче П. Хусанкай.

Шупашкарта тĕл пуличчен Митта Хусанкай патне виçĕ çыру ярать. 18 çул та тултарманскер, вăл самаях паллă Хусанкая çапла пуçласа çырать: "Эпĕ санпа курса калаçасса, иксĕмĕр лайăх паллашасса кĕтсе тăмарăм, тӳрех çыру ярас тесе шут тытрăм, мĕншĕн тесен сана хăвна курмасăрах лайăх пĕлетĕп, ăсна-пуçна таçтан инçетрен сисетĕп, эсĕ пирĕн лайăх юлташ иккенне аван тавçăратăп!.." Миттан пулас ĕмĕрлĕх тусĕ патне янă пĕрремĕш çырури **"пĕлетĕп", "сисетĕп", "тавçăратăп"** сăмахсене уйăрса палăртас килет. Мĕншĕн тесен шăп çавсем туслăх тĕпелĕнче, тымарĕнче пулнă пек туйăнаççĕ. А. Хусанкай пухса пичетленĕ "Митта Ваçлей çырăвĕсене" вуланă май çавна татах та тарăнрах ăнланса чуна хыватăн. "Эпĕ саншăн йĕнĕ чухлĕ, сан çинчен чĕререн шухăшланă чухлĕ, ахăртне, никамах та йĕреймен пуль, никам та шухăшламан пулас!..

…Эх, хам сăвăсене вуласа парăттăм та сана!.. Анчах çук!.. Кала, хăçан таврăнан эс Тăван çĕршыва?" Вăтам Азине кайнă Хусанкайпа çапла калаçать Митта 1927 çулхи кăрлач уйăхĕнче. Малалла ăнтăлакан, тĕрĕсне шыракан, аташакан, çухатакан, тупакан çамрăк Миттана питĕ ăнланакан, итлекен, канаш паракан шанчăк, тĕрек, тус кирлĕ пулнă... Çырусем Миттана тусĕпе чунтан калаçса, çывăхланса хăйне тĕнчене ăнланма хăват параççĕ. "Темрен те хаклă тантăшăм Хусанкай!.. Эх, Хусанкай, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?" тесе ыйтать вăл хăйĕн тусĕнчен:

**Ăшăм çунать,**
**Хыпать вăл паян ман...**
**Ăçта чикес,**

**Вăл вĕт тӳсет...**

**Чĕремçĕм, эс ан ман**

**Таçта ютра**

**Аташнă тусăма!**

**Епле тусес**

**Çак чиксĕр хурлăха?..**

**...Илтсем, тăван,**

**Ман йывăр сассăма.**

**Ан ӳпкеле,**

**Вăл ирсĕр пулсан та.**

**Ан каласам:**

**"Эс ешĕл, эс ăнман!"**

**Ĕмĕр манми**

**Тăванăм Хусанкай.**

Хăйшĕн те, тусĕшĕн те хыпса çунать çамрăк чĕре, "аташуран" тухма çул шырать, шанать, ĕненет, ăнтăлать.

Митта Хусанкай патне туртăннине А. Артемьев "Эпĕ курнă-пĕлнĕ Хусанкай" аса илĕвĕнче çапла ăнлантарса парать: "... вулакансем умне... чи малтанах çамрăк сăвăçсем умне темле «легендарлă», ытлашши ӳстерсе янă "чаплă", никама, ниме пăхăнса тăман, чарусăр поэт-индивидуалист тухса тăнă, вăл романтикăлла шухăш-ĕмĕтлĕ яшсене килĕшмесĕр, илĕртмесĕр тăма пултарайман. Шăпах çапла (кăштах фанатикла та!) юратнă ăна Митта Ваçлейĕ те, Паймен та... Чăн та, кашни хăйне е в ĕ р л ĕ юратнă, х и с е п -. ленĕ".

Çак пĕрремĕш юрату -нумай çул витĕр тухса - пĕр вăрлăха, пысăк сас палиллĕ, чăн-чăн çынсен чăн Туслăхне ӳссе çирĕплетет, шăпапа ĕмĕрĕн тĕрлĕ нуша тертĕнче туптанать...

Тата тепĕр кĕнеке - "Тăван сасăсем". Титулĕ çинче çак сăмахсене вулатпăр:

**Митта Ваçлейне**

**Эс çуккине ялан туяттăм...**

**Салам сана, çумри çунатăм!**

Вун çичĕ çул "Культ киремечĕн" тĕпсĕр хуранĕнче хăварать Митта Ваçлейĕ, вун çичĕ çул вăл тăван çĕршывран татăлса , пуç янă çĕртре ирттерет. "Вунă çул лашманта, пилĕк çул чалтунта çӳрерĕм", - тесе çырать Митта яланлăхах киле таврăнас умĕн А. Талвир патне. 1947 çулта раштавра тăван яла хăйĕн пĕрремĕш срокĕ - - шăпах вунă çул - вĕçленнĕ хыççăн килет. Анчах ку ирĕксĕр ирĕк нумая пымасть - 1949 çулхи ака уйăхĕнче поэта татах тытса каяççĕ. 1954 çулта çеç "ăшă кунсем" çитнĕ кĕркунне, Митта Ваçлейĕ-тăван çĕршыва пуçĕпех, айăпсăр айăпланă таса ятне тӳрре кăларса, таврăнать.

Çак çулсене Митта хăй мĕнле хакланине ун çырăвĕсен сыпăкĕсене илсе кăтартас килет. Акă 1944 çулта мăшăрĕ патне çырнă çыруран; "Çичĕ çул... вĕсем маншăн пĕр усал хура кун пек, ниепле вăранаймасăр куракан асаплă тĕлĕк пек. Çав вăхăтрах эпĕ сирĕнтен ĕнер çеç уйрăлса тухнă пек, тин çеç, ĕнер çеç пек. Вăл ĕнтĕ манăн пурнăçăм пулăм тĕлĕшăнчен пушă иккенне пĕлтерет. Ирĕкре кашни кунăн хăйĕн туйăмĕ, творчествăлла содержанийĕ пур, кашни кун - пархатарлă çыншăн пултаруллă ĕç тапхăрĕ, кунта вара йăлтах урăхла, вăхăт калама çук тăрлавсăр иртет, пĕр хут - тепĕр кунăн копийĕ, эпир кунта, выльăхсем пек, вăхăт туйăмне çухатнă, çавăнпа та сиртен уйрăлни ĕнер çеç пек туйăнать... эпĕ айăплă -хам айăпсăрлăх çинчен çынна ĕнентерме пултарайманнишĕн, çавна пула çакă çичĕ çул хушшинче тăван чăваш халăхĕшĕн пĕр шăрпăк та усă кӳрейменнишĕн, сире çакăн пек телейсĕр тунишĕн, юлашкинчен - тăвата тăванăм пек çак ахăр саманара пуçа хурайманнишĕн. Мĕн чухлĕ калас сăмах, мĕн чухлĕ тăвас ĕç çухалчĕ, мĕн чухлĕ çутă ĕмĕт сая кайрĕ ман çак çичĕ çул хушшинче!...

Киле эпĕ сывлăх тĕлĕшĕнчен тĕрекленсе, мораль тĕлĕшенчен тасалса таврăнăп... Çавăнпа та хам ирĕке тухнине творчество командировки пек йышăнăп эпĕ, каçса-антăхса кайиччен ĕçлĕп, çичĕ çул хушшинче тума пӳрменнине пĕр-ик çул хушшинче компенсацилеме тăрăшăп". Çак шухăша поэт "Тайăр" поэмăра та асăнать:

**Е кĕтнĕ кун çитес пулсан пĕр**
**те пĕр,**
**Эп çунăп иртнĕ хĕрупех, -**
**Ăмăртăва тухап яш-кĕрĕм**
**евĕр,**
**Вăй-кил кӳртен мăн кĕрӳ пек.**
**Эп таврăнăп йăвашшăн та**
**хаяррăн,**
**Çĕршыв туй-çуй тапратнă чух.**
**Хавхалануллă такмаксем**
**хайларăм,**
**Туй намăсне ярассăм çук."**

Çакна хуравланă евĕр янăрать Митта шăпинчен аран хăтăлса юлнă Хусанкайăн 1940 çулта çырнă "Инçетри тусăмсене" сăвви:

**Каçарăр, алă параймарăм:**
**Нумайăнччĕ эсир ун чух...**
**Чун тĕпĕнче ман пысăк**
**парăм,**
**Вăл нихăçан татăлас çук...**
**Анчах нихçан та никама та**
**Сутмарăм эп, хама çăлса.**
**Пĕр шухăшпа халь йăпанатăп:**
**Эп сирĕн умăрта таса.**
**Вăй патăр, тăвансем, вăй**

**патăр!**

**Çитеймĕ сассăм инçете.**

**Хамран килмерĕ ку,**

**каçарăр..,**

**Эп - сирĕн, тӳсĕмлĕ**

**тус-йышăм!**

**Кун çитĕ - илтĕр-ха мана.**

**Сире пĕр айăпсăр çуннишĕн**

**Тӳрре кăларĕ самана.**

Тепĕр кĕнеки "Поют дубравы" ятлă. Çырса хунă сăмахĕсем çапла:

**Василию Митта -**

**другу, поэту, голос**

**которого зазвенит вновь**

**в родной дубраве**

**Верю!**

Митта Васлейĕ инçетрен таврăнсанах тунсăхланă ĕçе - лите-ратура ĕçне кӳлĕнет, пĕр-икĕ çул хушшинче пайтах хӳхĕм хайлав çырма ĕлкĕрет.

1955 çул вĕçĕнче Хусанкай çырнă çыруран: "Асран кайми кунсем" (рецензи) ăша вырнаçрĕ. Татаччĕ, ытларахчĕ! Сăвăллаччĕ кун çумне! Санăн пĕтĕм хулăм сассупа таврăнма вăхăт. Халăх умне тухма тăхтани вырăнсăр мар-и? Кунсем, çулсем иртеççĕ…»

Хуравĕ 1956 çулхи «Кăмăлтан» кĕнеке пулса тухать:

Хĕнпе хĕрсе туптаннă сассăм

Каллех ян хурçă пек таса!..

Хусанкай вара хăй тусĕн кĕнеки çинчен Мускавран "кĕнекӳпе ыталашсах выртатăп" тесе хавхаланса пĕлтерет.

Пиçсе çитнĕ икĕ поэт, пурнăç тути-масине курнă çын, пысăк тус - Миттапа Хусанкай пĕр-пĕрне епле хакпа хакланине вĕсен 50-мĕш

çулсенчи çырăвĕсенче çивĕч сăмахпа чĕнсе каланисем тăрăх та курма пулать.

Хусанкайăн тăвата автографĕпе паллашни икĕ пысăк поэтăн ĕмĕр тăршшĕне пынă çирĕп туслăхне аса илтерчĕ. Çак пархатарлă туйăм хальхи çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăратъ.